ХЫПАР

Чăваш ачисен хаçачĕ

# Тантăш

6+

35 (4501) №, 2016, сентябрь (авăн), 8

1931 çулхи январĕн (кăрлачăн) 12-мĕшĕнче тухма тытăннă

Хакĕ ирĕклĕ

Индексĕ: 54802

ШКУЛА, АЧАСЕМ, ШКУЛА!

## Çĕнĕ вĕренӳ çулне – савăк кăмăлпа!

Авăн уйăхĕн пĕрремĕшĕнче шкул алăкне пуçласа уçса кĕрекенсене валли пĕрремĕш шăнкăрав янăрарĕ. Ку вĕренӳ çулĕнче шкул ачисен шучĕ пĕлтĕрхинчен вăтамран пин çурă ытларах. Пĕрремĕш класа каякансем те нумайрах кăçал, вунпĕрмĕшсем вара кăшт сахалланнă. Пĕтĕмĕшле илсен Чăваш Енри 468 шкулта вĕренекенсен йышĕ 130 пинрен те каçнă.

➲➲➲ 2-мĕш стр.








«ХЫПАРА» – КАШНИ ÇЕМЬЕНЕ

**Сентябрь уйăхĕн 1-мĕшĕнчен – 30% йӳнĕрех**

2017 çулăн I çурринче илсе тăмашкăн сентябрь ***уйăхĕн 1-мĕшĕнчен*** йӳнĕ хакпа:
«ХЫПАРА» – 572,88 тенкĕпе, «ХЫПАР-эрнекуна» – 279,36 тенкĕпе,
«ТАНТĂША» – 226,08 тенкĕпе, «САМАНТА» – 171,84 тенкĕпе, «ТЕТТЕНЕ» 135,42 тенкĕпе
кашни çыхăну уйрăмĕнчех çырăнтарăççĕ

1-мĕш стр.

# Çĕнĕ вĕренӳ çулне – савăк кăмăлпа!



Пĕлӳ кунне Шупашкарти 39-мĕш шкулта та тивĕçлĕ шайра ирттерчĕç. Пуринчен ытла вара çак уяв пĕрремĕш класа каякансемшĕн пĕлтерĕшлĕрех. Вĕсемшĕн пурнăçри çĕнĕ тапхăр уçăлать-çке! 1-мĕш «б» класра, сăмахран, ачасемпе ашшĕ-амăшĕ пыл хурчĕсем пекех сĕрлерĕç. «Ĕçе килнĕнех пуçтарăннă эпир кунта», – тесе йăл-йăл çиçсе ларчĕç малти партăна йышăннă хĕрачасем. Тăватă çул ытла çак шкулта ачасене пĕлӳ паракан çамрăк вĕрентекен Жанна Владиславовна Артемьева вĕсен калаçăвне илтсе хăй те ăшшăн кулчĕ. И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университетĕнче пĕлӳ илнĕскер пĕчĕкскерсенчен ырă та çĕршыва усăллă çынсем ӳссе ӳсессе шанать, çакăншăн вăй-халне шеллемесĕр тăрăшма тĕллев лартнă. Ахальтен мар унăн ĕçне шкулта ырлаççĕ. Нимĕнле йывăрлăх умĕнче те парăнма хăнăхман-çке çамрăк педагог.

Ачасен савăнăçне пĕрле пайлама ку уява ашшĕ-амăшĕ кăна мар, аслашшĕ-асламăшĕ те пуçтарăннă. Софья Осипова сывăх çыннисем çак яваплă самантра унпа юнашар пулнишĕн чунтан хĕпĕртет.

– Паян пĕрремĕш хут мар-ха эпир кунта, ĕнер уява хатĕрленсе класс капăрлатма та килтĕмĕр. Софья юлташсем тупрĕ. Халĕ ăна хаваслăрах та кăсăклăрах пулĕ, – терĕ хĕрачан амăшĕ.

Ксения Платонова парта хушшине ларасса тахçанах чăтăмсăррăн кĕтнĕ, тинех вăл хăйне висĕсĕр телейлĕ туйса илнĕ. Шкула каймалли пĕрремĕш кунах çывăрса юлас мар тесе ир-ирех вăраннă хĕр пĕрчи. Вĕренсе пысăк çын пулма ĕмĕтленекенскер пĕлӳ тĕнчипе паллашма хатĕррине пĕлтерчĕ.

Савăнăçлă линейкăра та пĕрремĕш классем – куç умĕнче. Пурте вĕсене сăнаççĕ, аслисем вара çав вăхăтрах хăйсен ачалăхне те аса илеççĕ. Линейка хыççăн ачасем пĕрремĕш урока кĕрсе ларчĕç. Кунта кашниех хăйĕнпе паллаштарнă май ӳссе çитсен кам пулма ĕмĕтленнине каласа пачĕ. Шăпăрлансене ĕненес пулсан, çак шкултан пирĕн пулас архитекторсем, бухгалтерсем, артистсем тата ытти пысăк пĕлтерĕшлĕ профессисен çыннисем вĕренсе тухмалла. Эппин, çĕршыв пуласлăхне шанмаллах.

Шкул директорĕ Вениамин Васильевич Михайлов пĕрремĕшсене класа кĕрсе саламларĕ, пысăк та ăслă çын пулма сунса ырă сăмахсем каларĕ.

Аслăраххисем те уява хаваслă кăмăлпа пуçтарăннă. 10-мĕш «б» класри Максим Федоровпа Артем Фомин çуллахи усăллă кану хыççăн çĕнĕ вĕренӳ çулне çанă тавăрсах пуçăнма хатĕррине пĕлтерчĕç. Максим каникула Красноармейски районĕнчи Дворик ялĕнче ирттернĕ. Ял ачисемпе танах утă типĕтнĕ, кĕтӳ кĕтнĕ тата пахчари ĕçсене хутшăннă. Çав вăхăтрах интереслĕ кĕнекесемпе паллашма та май тупнă.

– Вулама питех юратмастăп эпĕ, – тет арçын ача тӳррĕнех. – Çапах та пĕр пуçăнсан, кăсăкланса кайсан вĕçне тухмасăр чарăнмастăп.

Артемшăн вара каникул лагерьте канни асра юлнă.

8-мĕш «а» класри Денис Емельяновпа Никита Федоров та кану лагерĕнче сывлăха çирĕплетнĕ. Çав вăхăтрах яла, йăх тымарĕсен вырăнне, кайса курма та ӳркенмен. Денис Комсомольски районĕнчи Йӳç Шăхальте аслашшĕпе асламăшне кил тĕрĕшре пулăшса савăнтарнă, Никита вара – Елчĕк районĕнчи Лаш-Таяпара. Арçын ачасем иккĕшĕ те шкул пурнăçĕнче хастарлăхпа палăраççĕ, спортпа туслă. Никита шкул хыççăн архитектора вĕренес кăмăл пуррине пĕлсен юлташĕсем тĕртсе те илчĕç.

– Хăв фризби енĕпе ăмăртусенче те палăратăн. Çапах архитектор пуласшăн-и? – терĕç юлташне пуласлăхра паллă спортсмен пек куракансемсем.

Арçын ача вĕсене хирĕç сăпайлăн кулса илчĕ çеç.

– Эпĕ виççĕмĕш класранпа çак шкула çӳретĕп, – пĕлтерчĕ 11-мĕш «ю» класри Катя Егорова. – Вĕрентекенсем питĕ кăмăллă пулни çĕнĕ пĕлĕве ăса хывма хавхалантарать. Кăçал вĕренсе тухатăп ĕнтĕ. Чи кирли, экзаменсене лайăх тытасчĕ.

Маттур ачасем «Тантăш» вулакансене ниме пăхмасăр çĕнĕ пĕлĕве ăса хывма сунчĕç.

– Чи кирли, нихăçан та кулянса пуçа усмалла мар, – тесе пĕр шухăшлă пулчĕç вĕсем.

**ШКУЛ ДИРЕКТОРĔН САМАХĔ**

***Вениамин Васильевич МИХАЙЛОВ /39-мĕш шкул директорĕ пулса 28 çул ĕçлет; Раççейри Çулталăк директорĕ; Чăваш Енри тава тивĕçлĕ вĕрентекен; Раççейĕн Вĕренӳ министерствин Хисеплĕ ĕçченĕ/:***

– Кăçал пĕлӳ суртне 950 яхăн ачана йышăнтăмăр. Вĕсене вĕрентме лайăх услови пултăр тесе тăрăшатпăр. Çулла юсав ĕçĕсем ирттерме хула администрацийĕ 4 миллион тенкĕ уйăрчĕ. «Элара» завод та пулăшрĕ. Шкула çĕнĕ асфальт çул ертсе кĕрет, коридорсенчи урайсене те тĕпрен улăштарнă, акт залĕпе столовăйĕнче юсав ĕçĕсем ирттернĕ… Классене ашшĕ-амăшĕ пулăшнипе юсаса илемлетрĕмĕр, чӳречесене те улăштартăмăр. Кашни класа компьютерпа тивĕçтертĕмĕр. Ачасем пĕрремĕш класранах унпа ĕçлеме хăнăхаççĕ. Халĕ электрон дневниксем анлă сарăлчĕç, пирĕн шкул та ку çĕнĕлĕхрен айккинче юлмасть. Ача мĕнле вĕреннине ашшĕ-амăшĕ çав электрон дневник тăрăх пĕлсе тăрать. Шкулта вырнаçтарнă 28 видеокамера ачасене хăрушсăрлăхпа тивĕçтерме май парать.

Çĕнĕ вĕрентекенсем те килчĕç пирĕн пата: Ольга Петровна Третьякова тата Анастасия Валерьевна Зотова. Ачасем çирĕп те тарăн пĕлӳ илччĕр тесе вăй-хала шеллеместпĕр.

*Лариса ПЕТРОВА.*

## Шăнкăр-шăнкăр шăнкăравăм

Шăнкăр-шăнкăр шăнкăравĕ
Йĕри-тавра пин те пĕр.
Шкулăн шăнкăрти янравĕ
Асра юлчĕ пĕртен-пĕр.

Шкула килсен ун сасси:
«Кил-кил», – тенĕн туйăнать.
Утнă чухне хавасси
Ман чуна савăнтарать.

Çак шкулта санран асли
Нимĕн те, никам та çук.
Эс кунта чи янравли –
Саслăраххи урăх çук.

Пуçланаççĕ уроксем
Сан сассупа яланах.
Вĕçленеççĕ шăп вĕсем
Эсĕ сасă парсанах.

Е уяв шкулта пулсан,
Е тĕрлĕрен тĕлпулу,
Хуçаланать сассу сан,
Савăнтарать «кăмăлу».

Шăнкăр-шăнкăр шăнкăравăм,
Янра эсĕ яланах.
Манăн тусăм, йăс юлташăм,
Пурăн шкулта пĕрмаях.

Шел пулин те, шăнкăравăм,
Сывпуллашрăм эп шкулпа.
Ал сулса кăна хăвартăм.
Чĕрере эпĕ санпа!

*Юрий ПЕТРОВ.*

Шупашкар.

## «Çулăмлă йĕркесем» сăвă конкурсĕ

Конкурс йĕркелӳçисем – Раççей МЧСĕн республикăри тĕп управленийĕ, ЧР вĕрентӳпе çамрăксен политикин министерстви, республикăри ирĕклĕ пушарнăйсен обществи.

Конкурса Пушар хуралĕн çулталăкне, Раççей МЧСĕ 26 çул тултарнине тата Чăваш Енри Ĕç çыннин çулталăкне халалланă.

**Конкурс тĕллевĕсем:**

– хăрушсăрлăхпа, харпăр тата патшалăх пурлăхне пушартан сыхлассипе çыхăннă пĕлĕве пултарулăхра кăтартасси;

– пушарнăйпа çăлавçă профессине çутатасси;

– литературăна, патриотлăха, культурăна аталантарасси;

– ятарлă тематикăпа çырнă автор сăввисене пропагандăласси.

**Конкурс задачисем:**

– ачасемпе çамрăксенче хăрушсăрлăхпа çыхăннă пĕлĕве аталантарасси;

– пушар хуралĕн ĕçĕ-хĕлĕпе, историйĕпе паллашасси;

– çитĕнекен ăрăва пушарнăйпа çăлавçă профессийĕсемпе кăсăклантарасси;

– ветерансене хисеплеме вĕрентесси;

– пултаруллă çамрăксене тупса палăртасси, явăçтарасси тата хавхалантарасси.

Тупăшакансене çулне пăхса 4 категорире хаклĕç: 1-4, 5-8, 9-11 классенче вĕренекенсене тата студентсене.

**Номинацисем:**

1. Эпĕ пушарнăй пулăттăмччĕ: «Пушарнăй – епле мăнаçлă та вăйлă сăмах!», «Вутра эп тупрăм чун туртнă ĕçе», «Мирлĕ вăхăт пулсан та вĕсем çулăма хирĕç кĕрешекен вăрçăри салтаксем»

2. «Ырă тата усал вут-çулăм» хăрушсăрлăх Азбуки

3. Пирĕн ветерансем: «Мĕнле вăрттăнлăх пытаннă-ши пушар хуралĕн ветеранĕ чунĕнче?»

Конкурса шкулта вĕренекенсем, техникум-колледж тата аслă пĕлӳ паракан заведени студенчĕсем хутшăнма пултараççĕ. Кашнийĕн 3 сăвăран ытла мар, пичетлесе кăларса е электрон форматпа ярса памалла. Хайлава чăвашла та, вырăсла та хатĕрлеме юрать. Çавăн пекех унта автор хушамачĕпе ятне тата ашшĕ ятне, миçемĕш класра, ушкăнра, мĕнле факультетра, ăçта вĕреннине палăртмалла, кил адресĕпе çыхăнмалли телефон номерне те çырмалла.

Ĕçсене кăçалхи ноябрĕн 15-мĕшĕччен **Шупашкар, К. Маркс урамĕ, 37-мĕш çурт, «Центр противопожарной пропаганды и общественных связей ФГКУ «5 отряд федеральной противопожарной службы по Чувашской Республике – Чувашии»** адреспа тата **cppios@bk.ru** электрон адреспа йышăнаççĕ. Электрон çырура **«На конкурс»** тесе палăртмалла.

Конкурс ĕçĕсем асăннă центр архивĕнче юлĕç. Вĕсенчен хăшĕ-пĕринпе кайран информаци кăларăмĕсенче усă курĕç.

Ĕçсене 2016 çулхи декабрĕн 1-мĕшĕччен пăхса тухĕç. Вĕсене конкурс тĕллевĕне задачисене пурнăçланине, автор е пултарулăх коллективĕн ăсталăхне, сăвă шухăшне, материал хăйевĕрлĕхĕпе çивĕчлĕхне тата ӳнер ăсталăхне шута илсе хаклаççĕ.

Ыйтса пĕлмелли телефон: **/8352/ 62-12-56.**

Факс: 62-12-56. Электрон почти: cppios@bk.ru.

Тантăш
чăваш ачисен хаçачĕ

● УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви; Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

● ХАÇАТ ИНДЕКСĔ:
54802 - (çур çула) – Чăваш Республикинче

● Редакципе издатель адресĕ:
428019, Чăваш Республики, Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "Хыпар" Издательство çурчĕ" АУ техника центрĕнче калăпланă. "Чувашия" ИПК" АО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Чăваш Республики, Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "ЧУВАШИЯ" ИПК" ДИРЕКТОРĔ:
Тел.: 64-24-01

● ДИРЕКТОР - ТĔП РЕДАКТОР
М.М.АРЛАНОВ

● ТЕЛЕФОНСЕМ
директор-тĕп редактор: 56-00-67
редактор, çырусемпе тата юнкорсемпе ĕçлекен пай: 28-83-86
шкул ачисен пайĕ: 28-85-69
спорт тата экологи пайĕ: 56-11-80
право, кăмăл-сипет пайĕ: 28-83-89
факс: (8352) 28-83-70
бухгалтери: 28-83-64

● РЕДАКТОРШĂН
Л.ВАСИЛЬЕВА

● НОМЕР ВУЛАВÇИ
Л.ПЕТРОВА

● КАЛĂПЛАВÇĂ
Н.ПЕТРОВА

● ЭЛЕКТРОН АДРЕС:
e-mail: tantas@list.ru

● ТИРАЖ
1178 экз.

● ЗАКАЗ
№ 3158
Пичете авăн уйăхĕн 7-мĕшĕнче алă пуснă.

● ПИРĔН САЙТ:
www.hypar.ru

Газета «Тантăш» («Ровесник») зарегистрирована Управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций (Роскомнадзор) – свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ТУ21-00306 от 10.12.13 г.

Ⓟ паллăпа реклама материалĕсене палăртнă

Пичете графикпа 15 сехетре алă пусмалла, 14 сехет те 00 минутра алă пуснă.

## Андриян Николаев çуралнăранпа – 87 çул!

*Андриян Григорьевич Николаев 1929 çулхи авăн уйăхĕн пиллĕкмĕшĕнче Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Шуршăл ялĕнче çуралнă. Вăл – СССР космонавчĕ, Авиаци генерал-майорĕ /1970/, Совет Союзĕн икĕ хут Геройĕ /1962, 1970/, СССР космонавт-летчикĕ /1962/, техника ăслăлăхĕсен кандидачĕ /1975/.*

*2004 çулхи утă уйăхĕн 3-мĕшĕнче унăн чĕри яланлăхах тапма чарăннă.*

*Мухтавлă ентешĕмĕр çуралнă кунне республикăра çулсеренех чыслăн паллă тăваççĕ. Вĕренӳ заведенийĕсенче те мĕн тĕрлĕ мероприяти иртмест-ши! Ачасем, шухăшласа пăхăр-ха, Андриян Николаев та тӳрех паллă çын пулса çуралман-çке. Вăл та тахçан пĕчĕк пулнă, ытти ачасемпе танах шкулта вĕреннĕ. Шăпа ăна нихăш енчен те иртĕхтермен. Тĕрĕссипе каласан, пурнăçĕ хальхи вăхăтри ачасеннипе танлаштарсан чылай йывăртарах килнĕ. Анчах Андриян нихăçан та пуçа усман, кирек епле ĕçе те таса кăмăлпа, пысăк çын пек яваплăн пурнăçланă, шкулта та лайăх вĕреннĕ. Шăпах çак ырă енсем пулăшнă та ăна малалла аталанса тĕнче уçлăхне парăнтарма.*

*Ачасем, сирĕн ĕмĕт пур-и? Ĕмĕт пурри аван ĕнтĕ, çурăм хыçне çунат хушнăнах туйăнать. Андриянăн та пулнă вăл…*



## Ĕмĕт

**Юхма МИШШИ**

Пĕррехинче Шуршăла Николаевсен çывăх тăванĕ Михаил Громов килчĕ. Вăл – летчик. Инçет вĕçевре пулнă.

– Летчик вăл, шăпăрланăм, – тӳпе хуçи, – йăл кулчĕ Миша пичче пĕчĕк Андрейкăна ăнлантарнă май. – Пĕлĕтсем хыçне вĕçсе хăпаратăн та ăмăрткайăк пек ярăнса çӳретĕн. Тӳперен çĕр çине пăхатăн!

Çакăн хыççăн ял çийĕн самолет вĕçсе иртнĕ чухне Андрейка кашнинчех çӳлелле пăхса:

– Миша пичче! Миша пичче, мана та пĕрле ил! – тесе кăшкăрма тытăнчĕ.

«Вĕçес килсен Улăп пек хăюллă пулмалла», – аса килчĕç çав вăхăтра Миша пиччен сăмахĕсем.

Пĕчĕк Андриянăн кусĕсем çунсах тăраççĕ. Темĕнле ăнланмалла мар хĕрӳлĕх çавăрса илнĕскер амăшĕ патне чупса пычĕ те:

– Анне, эпĕ те ӳссе çитсен летчик пулăп, Миша пичче пекех! – терĕ.

Анна Алексеевна ывăлне пусăран лăпкарĕ:

– Пулатăн, ывăлăм, пулатăн!

Летчик пулас ĕмĕт çапла çуралнă. Ун чухне Андриян пиллĕкре пулнă.

Андрейкăн ĕмĕчĕ çуралнине çĕмĕрт çеçке çурнипе танлаштарма пулать. Акă хĕвел пăхса ячĕ те хăйĕн ăшшине çут çанталăка парнелеме тытăнчĕ. Çĕмĕрт те çеçке çурса ăна пĕтĕм тĕнчене кăтартать.

## Çамрăк сăвăç Анита



Тăххăрмĕш класри Анита Алемесова кашни япалара илемлĕхе курма пултарать. Ытларах чухне ку çут çанталăкпа çыхăннă. Çулла ем-ешĕл улăхсемпе çарансем, куçа йăмăхтаракан тĕрлĕ тĕслĕ чечексем, кĕркунне хĕрлĕ-сарă çулçăллă йывăç-курăк, хĕлле вара шап-шурă мамăкпа витĕннĕ таврăлăх… Шел те, пур саманта ас туса юлма пулмасть. Анчах ăна хут çине куçарма май пур! Хутпа кăранташ, сăрăсем е ручкăпа тетрадь çеç кирлĕ. Анита çапла тăвать те. Вăл ӳкерме тата сăвă шăрçалама ăста. Мĕн пĕчĕкренех кăсăкланать иккен. Акă нумай пулмасть унăн пĕрремĕш юптарăвĕ кун çути курнă.

– Юптару тӳрех «яка» пулса тухрĕ пек туйăнать. Манăн пултарулăхăн чи малтан аттепе анне, чăваш чĕлхи вĕрентекен Людмила Анатольевна Тихонова хĕпĕртерĕç. Чун савăнать кун пек чухне, тата та нумайрах çырас килет, – калаçрĕ çамрăк сăвăç.

Мĕнле çуралнă-ха юптару? Питĕ ансат-мĕн – чăваш литературипе киле ĕç парса янă, тепĕр урока хайлав çырма хушнă. Анитăн вара улттăри йăмăкĕпе вылянă самантрах пуçра йĕркесем çуралнă. Çапла, ăнсăртран кун çути кураççĕ çав сăвă-калавсем. Кун пек самантсенче чи кирли – вĕсене хут çине куçарасси, унсăрăн манăçма пултарать.

Хĕрачан сăввисем чăваш ачисен юратнă хаçатĕнче, «Тантăшра» та чылай хут пичетленнĕ.

– Турă панине кашнийĕнех аталантарма тăрăшмалла, унсăрăн вăл пĕтсе ларать. Кам сăвă çырассипе кăсăкланать, çавсене сĕнӳ парас килет. Хайлавсене ыттисене кăтартма вăтанмалла мар. Май пур таран хаçат-журнала пичетлеме парăр. Конкурссене хутшăнăр. Çырас туртăм пысăк пулсан унран мĕншĕн ютшăнмалла? Аталану çеç çитĕнӳ патне çитерет, – шухăшлать пултаруллăскер.

Сăвă çырасси чунне çывăххине пĕчĕкренех туйса илнĕскер унпа малашне те кăсăкланма пăрахман. Çак енĕпе тата ӳкерессипе тĕрлĕ конкурс-викторинăна хутшăнса палăрать. Çутă ĕмĕчĕпе те паллаштарчĕ Анита – вăл сăвăсен пуххине хатĕрлесшĕн. Хăйĕн хайлавĕсемпе «Тантăш» страницисене те пуянлатма сăмах пачĕ çамрăк талант.

***Нина ЦАРЫГИНА.***
Красноармейски районĕ,
Пикшик шкулĕ.

## Уçă сăслă Даниил

Авă, кантăк умĕнче ӳсекен лапсăркка хурăнăн симĕс çулçисем хушшинче саралнисем курăнчĕç. Кам çапла ашкăнать симĕс тума пăсса? Никам та мар, кĕр ĕçĕ ку. Çавă ытараймасть сарă-кĕмĕл тĕссене. Вăл, хутран-ситрен, ир-каç çынсем сисиччен, симĕс çулçăсене сарă сăрăпа сăрласа илет. Тĕлĕнмелле, кунсем ытла хăвăрт иртеççĕ иккен. Паян акă – сентябрь уйăхĕ, кĕркунне те çитрĕ. Çавна май ачасем те куллен шкулалла васкаççĕ.

Йĕпреç районĕнчи Кĕлĕмкасси шкулĕн 7-мĕш класĕнче вĕренекен Даниил Анисимов каникулта яланах футболла вылянине мăнаçлансах пĕлтерчĕ.

– Спортпа туслă пулни сывлăхшăн усăллă. Шывра та пĕрре мар чăмпăлтатнă. Туссем унта чылайччен ишеççĕ пулсан, эпĕ вĕсем пек пултараймастăп. Шывран шикленетĕп. Хампа пулса иртнĕ синкерлĕ кун паян та куç умĕнчех... Ун чухне виçĕ çултаччĕ эпĕ. Аннепе пĕве хĕррине япала чӳхеме кайрăмăр. Эпĕ, ларма-тăма пĕлмен ача, анне ĕçленĕ вăхăтра унран вăрттăн шыв çывăхне хавасланса чупрăм. Темле майпа ура шуса кайрĕ, шыва кĕрсе ӳкрĕм. Анне туртса кăларчĕ те кăшкăрсах макăртăм. «Шывăн турачĕ çук», – текен каларăша ĕнтĕ яланах асра тытатăп, – тет хастар вĕренекен иртнĕ вăхăта йывăррăн аса илнĕ май.



Даниил класри чи чаплă юрăç. Сасси уçă унăн. Сцена çинче такама та тыткăнлама пултарать. «Шăнкăрма» фольклор ушкăнне юратса çӳрекенскер иртнĕ вĕренӳ çулĕнче республикăри ăмăртура пĕрремĕш вырăна тухнă.

– Пирĕн йăх çавнашкал, юрăсăр пурăнаймасть. Аннен те ку енĕпе пултарулăхĕ вышкайсăр. Унăн пиччĕшĕ, Станислав Аркадьевич Анисимов, хамăр шкултах музыка урокĕсене иртерет. Иккĕмĕш сыпăкри аппа, Пучинке шкулĕнче вĕренекен Юля Васильева, юрри-ташшипе куракана пĕрре мар тĕлĕнтернĕ. Малашне те пултарулăхĕ çавнашкалах тапса тăрасса пĕрре те иккĕленместĕп. Е тата Алена аппа пирки мĕнле аса илмĕн? Вăл та юрă-кĕвĕ тĕнчипех пурăнать. Пĕр вăхăт Августа Уляндина юрăçпа та юрланă. Хам астăвасса вĕсем пирĕн яла та концертпа килнĕччĕ. Ун чухне мĕн тери ăмсаннăччĕ эпĕ вĕсене. Таçта шалта пултарулăхăм тапса тăнине икĕ çул каялла туйрăм та хам сцена çине хăпарма тытăнтăм, – тет Даниил хăпартланса.

Хастар вĕренекен ӳссен кам пулассине хальлĕхе татса калаймасть.

– Унччен вăхăт пур-ха, çавăнпа вĕренӳ çине ытларах вăхăт уйăрмалла, – тет вăл çирĕппĕн.

***Луиза ВАСИЛЬЕВА.***
Йĕпреç районĕ,
Кĕлĕмкасси.




## Йăмăк

Манăн хаваслă йăмăк пур.
Пĕчĕкскер вăл, пит маттур!
Пичĕ-куçĕ ун илемлĕ,
Япали ялан тирпейлĕ.
Ирех тăрать, тумланать,
Ача садне вăл васкать.
Хăйĕн çепĕç чĕлхипе
Чĕвĕлтетет пуринпе.
Çынсем унпа паллашаççĕ,
Пурте халь ăна палласçĕ.
Иртсе кайнă чух ялан
Ыр сунаççĕ кăмăлтан.

***Настя АФАНАСЬЕВА.***



***Даша МИХАЙЛОВА***
(Йĕпреç районĕ, Çăкалăх) ***ӳкерчĕкĕ.***

## Шăллăм

Макар ятлă шăллăм пур,
Пуринчен те вăл маттур!
Пултарулă-çке ĕçре,
Тăрăшать вĕренӳре.
Юратаççĕ ăна пурте,
Савăнаççĕ унпа килте.
Ăна хытă савнăран
Кĕвĕçетĕп хушăран.

***Максим МАКАРОВ.***

## Паттăрсене астуса

Çамрăк яшсем, пикесем,
Çĕнĕ ĕмĕр ачисем!
Вăрçă шавне илтместпĕр,
Нуша мĕнне пĕлместпĕр.

Хаяр вăрçă… Мĕн-ха вăл?
Куççуль юххи, çил-тăвăл,
Хĕрлĕ ялав… Вĕри юн…
Тертпе асап кашни кун…

Мускав сывăхне тăшман
Туслашас тесе пыман.
Вăл аркатнă, çĕмĕрнĕ,
Тискерленсе вĕлернĕ.

«Барбаросса» планĕпе
Виçĕ уйăх хушшинче
Пирĕн Мускав хулине
Гитлер çитсе кĕмелле…

Анчах халăх парăнмасть,
Шит те каялла чакмасть.
Ватти-вĕтти кар тăрать,
Туслăх пире вăй парать.

Хурах вилĕм сапалать,
Халăх йышлă тăканать.
Пурпĕр парăнас темест,
Пурнăçне те шеллемест.

Заводсенче – ачасем.
Аслисемпе тан вĕсем.
Вăйран кайса ĕçлеççĕ,
Нуша мĕнне пĕлеççĕ.

Тискер фашист ĕненмен
Эпир вăйлă пуласса.
Тĕлĕкре те тĕлленмен
Сиккипеле тарасса.



***Таня ИВАНОВА***
(Йĕпреç районĕ, Çăкалăх) ***ӳкерчĕкĕ.***

Мăн кукаçи çак вăрçа
Кайнă вăтăр тват çулта.
Кукамай вăл вăхăтра
Пулнă иккĕри ача.

Вăрçă хирĕ – аслă хир,
Хăварать ĕмĕрлĕхе
Кукамая ашшĕсĕр…
Ыр çемьене тĕрексĕр…

Мускавран Берлин хули
Пин те улт çĕр çухрăмра.
Инçе те мар çав тери
Çитсе вăрçа тĕп тума.

Тарпа, юнпа витĕннĕ
Тертлĕ, хура, йывăр çул.
Тăват çултан çитейнĕ…
Вутра-шывра – тăват çул…

Шеллемесĕр хăйсене
Паттăррăн пуç хунисем
Курайман Рейхстаг тăрне
Хĕрлĕ ялав çитнине.

Йывăр тăпрăр çăмăл пултăр,
Сирĕн йăхăр сывă пултăр.
Пуç таятпăр тав туса,
Аслă вăрçа ылханса.

Паттăрсен ыр ячĕпе,
Ваттисен тивлечĕпе
Мирлĕ пурнăçа упрар,
Пурте туслă пурăнар.

***Валерия КУЗЬМИНА.***
Комсомольски районĕ,
Çĕнĕ Мăрат шкулĕ.

## Парне

Каçхи тĕксĕм пусрĕ
Ĕнтрĕк таврана.
Кил картине тухрĕ
Асатте манпа.
Пĕр кана итлерĕ
Ялти шăплăха,
Сăнаса тимлерĕ
Çак тавралăха.
Шăпчăкĕ юрларĕ
Хĕвел аннă май,
Асатте калаçрĕ
Манпала самай.
Йĕркипех пĕлетĕп
Унăн калавне,
Тимлесех итлетĕп
Кашни сăмахне.
«Телейпе ӳсетĕр –
Куншăн савăнап.
Усăха вĕçетĕр –
Ватăран сăвап!
Шухăш-ĕмĕт уçă
Çамрăк ăрусен,
Çутă-çутă шуçăм
Пултăр ачусен!
…Çирĕмри яш каччă,
Эпĕ – вăрçăра!
Тимĕр автомачĕ
Манăн алăра!
Тĕтĕмпе хупларĕ,
Юн тăкать тĕнче,
Вилĕмĕ тулларĕ
Вăрçă хирĕнче.
Çунать çулăмра
Тăван Çĕр-анне!
Тытап аллăмра
Çирĕп пăшалне.
Çĕршывăн чĕри
Пулмасть пусмăрта.
Тăшманăн ури
Ан пустăр унта!
Çĕр халăх пĕрле,
Пин халăх манпа!
Килмерĕ кĕрсе
Тăшман Мускава.
Тăванăн чĕр юнĕ
Юхать таврара.
Çĕр-пин юлташ чунĕ
Пĕтрĕ вăрçăра.
Паман Мускава,
Мăнукăм, эпир!
Пурнан пурнăçра
Ялан пултăр мир!
Тертпе, нушапа,
Инкек-синкекпе –
Çапла ман шăпа,
Мăнукăм, пепке!..

***Анжела ФЕДОРОВА.***
Çĕрпӳ районĕ,
Патăрьел шкулĕ.

## Хаваслă вăйă

Эпĕ тухрăм урама
Ачасемпе выляма.
Ачасем пит савăнаççĕ,
Хирĕç пăхса йăл кулаççĕ.
Эпĕ те пит хĕпĕртерĕм,
Хаваслансах выляс терĕм.
Каçхи вăйăа тухрăмăр,
Юрăсем юрларăмăр.

***Марина ОХТЯРОВА.***
Хĕрлĕ Чутай районĕ,
Чурпай.



***Ксюша КОШЕЛЕВА***
(Йĕпреç районĕ, Çăкалăх) ***ӳкерчĕкĕ.***

## Аннене

Аса ил эс мана хура каç çитсессĕн,
Уйăхĕ йăвашшăн хăпарсан çӳле.
Аса ил эс мана çутă ир килсессĕн,
Хĕвел пайăрки шевле парсан киле.



***Кристина ВАСИЛЬЕВА***
(Елчĕк районĕ, Аслă Таяпа) ***ӳкерчĕкĕ.***

Пулăн эс уйăх, эпĕ пулăп çăлтăр.
Пулăн хĕвел, эпĕ – сан пайăрка.
Калăп, анне, пур тĕнче те ăнлантăр:
Хуть те хăçан эпĕ пулăп санпа.

Пултăр çич ют – вăл пире уйăраймĕ!
Пулсан хулара – çырупа калаçатăп.
Кашни ача аннесĕр пурăнаймĕ.
Эпĕ, анне, сана пит юрататăп!

***Юлия ВАСИЛЬЕВА.***
Патăрьел районĕ,
Çĕньял.

## Сывă çын

Сывă çын вăл ырă чунлă,
Ăслă шухăшлă, ĕçчен.
Вăл спортпа та питĕ туслă,
Чире çĕнтерет пĕччен.
Сывă çын вăл таса чунлă,
Пит илемлĕ те сăпай.
Спортсăр вăл пĕр кун та пулмĕ,
Тус-юлташ та ун нумай.

***Диана СОКОЛОВА.***
Шупашкар,
19-мĕш шкул.

## Çăлтăр

Хĕвел анчĕ. Тĕттĕмленчĕ.
Уйăх тухрĕ тӳпене.
Çут çанталăк илемленчĕ –
Пит хитре-çке каçхине.
Çак илемлĕхе савса
Эпĕ тухрăм уçăлма.
Авă, тӳрех ман ума
Тухрĕ çăлтăр ярăнса.
Пĕчĕк çăлтăр пулчĕ çав,
Хăй çутине вылятса
Чĕнет таçта аякка
Мана хăйпе калаçма.
Шутласа пĕтерес çук
Çавăн чухлĕ çăлтăра.
Вĕсем нихçан пĕтес çук
Каçхи тӳпе-уçлăхра.

***Марина МАДЕЕВА.***
Шупашкар,
33-мĕш шкул.



***Ксюша КОШЕЛЕВА***
(Йĕпреç районĕ, Çăкалăх) ***ӳкерчĕкĕ.***

# Анкета



Эпĕ текех шкул ачи мар. Çапах та çав ырă вăхăтсем асрах. Пирĕн ачалăхра чаплă йышши смартфонсем, ноутбуксем тата, паллах, социаллă тетелсем çукчĕ. Хĕрачасенчен чылайăшĕ анкета пуçлатчĕ. Çав ыйту тетрадьне мĕн тĕрлĕ капăрлатман-ши: пĕрисем унта тĕрлĕ тĕслĕ журналсенчен касса илнĕ хитре хĕрачасене çыпăçтаратчĕç, теприсем ўкерчĕксемпе илемлететчĕç. Анкетăна пĕр-пĕрне çырса хуравлама параттăмăр, калаçма юратманнисене те тыттараттăмăр.

Пĕррехинче пирĕн урамри хĕрачан анкети арçын ачасен аллине лекнĕ. Вăл вара унта пĕтĕм страница пысăкăш: «Эпĕ Тимура юрататăп», – тесе çырнăччĕ. Унта виççĕмĕш сыпăкри пиччĕшĕ пирки сăмах пыратчĕ.

Хĕрачапа кўршĕлле пурăнакан Тимур вара Аня хăйне юратать тесе шухăшланă та питĕ савăннă, ăна утăм утма та памастчĕ, кашнинчех сăмах хушма тăрăшатчĕ. Çакă мĕнпе çыхăннине Аня тўрех ăнланаймарĕ. Арçын ачасем çине пăхма вăхăт та пулман унăн – вăл ўнер шкулне çўретчĕ, чун киленĕçĕ пирки кăна шухăшлатчĕ. Çак хĕрача Тимура унчченте килĕшетчĕха, анкетине вуланă хыççăн вара тата ытларах илĕртме тытăнчĕ. Чĕринче юрату вăй илнине ăнланчĕ арçын ача. Шел, Аня ун çине пăхмарĕ.

Эх, мĕне кирлĕччĕ-ши çав анкетăна вулани?..

*Светлана И.*

Канаш районĕ.

---

**● ĂСЛĂ КАЛАНĂ**

Ирхине вăрансан чи малтан тата каçхине çывăрса каяс умĕн чи кайран санăн шухăшна килекен çын вăл – е телейўн, е ыратăвун сăлтавĕ.

*Эрих Мария РЕМАРК.*

Пур пулăм та ырра пулнине пĕлмен-и эсĕ? Анчах та çакă питĕ вăрах килет. Иртнĕ пурнăç лавне хăв хыççăн сĕтĕрмесĕр малалла каймалла çеç, унсăрăн вăйран хăшкăлăн.

*Эльчин САФАРЛИ.*

Туртăну пулмасан асаплану та çук.

*БУДДА.*

Телейлĕ çын теприне усал сунмасть.

*Лев Николаевич ТОЛСТОЙ.*

Эпир хăнăхнине хирĕç кайсан кăна улшăну пулса иртет.

*Пауло КОЭЛЬО.*

Пĕтĕмпех пирĕн алăра, çавăнпа ăна усма юрамасть.

*Коко ШАНЕЛЬ.*

Эпĕ юрататакан çын мана уççăн юратма ан хăратăр. Унсăрăн ку питĕ кўренмелле.

*Александр Сергеевич ПУШКИН.*

Чи кирли, хăвна анултала.

*Федор Михайлович ДОСТОЕВСКИЙ.*

---

# Тĕл пултăм тет…

Эпĕ пысăках мар ялта пурăнатăп. Кану кунĕсене кунта часчасах хула ачисем килеççĕ. Вероника та вĕсен шутĕнче. Вăл – манăн пĕрремĕш юрату. Мĕн кăна туман-ши эпĕ: ăна каçсерен уçăлма чĕнеттĕм, лавккаран таврăннă чухне сумка йăтса пулăшаттăм, шăллăма унăн велосипедне вăрлама тархаслаттăм та кайран япалана тавăрса панă чухне хама паттăрла тытаттăм. Анчах та чи пысăк чăрмав – çак хĕрачан асламăшĕ! Вăл темĕнле сăлтав тупса /эпĕ вĕсен пахчинчен хăяр вăрланă имĕш/ Вероникăна манран сивĕтрĕ. Паллах, хĕрў чĕрене çакă та тытса чараймарĕ.

Пĕррехинче Вероникăн сумки пирĕн пĕвене кĕрсе ўкрĕ. Эпĕ хама супермен пек туйса ăна пĕчĕк кĕпер çинчен пысăк патакпа çаклатса илесшĕнччĕ. Пĕтĕмпех ăнăçлă пулĕччĕ… çывăхра шăллăм велосипедпа иртсе пыман пулсан. Кĕпер силленсе илчĕ те шыва çăтăл-çатăл персе антăм. Эпĕ, шурлăхра чăмпăлтатаканскер, Вероникăна пурпĕрех сумкине тыттартăм, вăл илчĕ те мана йăл кулă парнелерĕ, паян клубра манпа кăна ташлама сăмах пачĕ. Хамран сăмсана çуракан шăршă кĕнине пăхмасăрах телейпе çунатлантăм, килелле çил пек вĕçтертĕм.

Анчах каçхине кĕтмен парне «савăнтарчĕ». Ирхине таса мар шывра чăмпăлтатнă хыççăн манăн хитре çўçре лайăх мар «юлташсем» пурăнма тытăннă. Ăслă чĕлхепе каласан, эпĕ педикулезпа чирлесе ўкрĕм. Сипленме вăхăт çуккипе шакла хырăнтăм та тахçантанпах кĕтнĕ тĕлпулăва ваксарăм.

Вероникăн килĕ умĕнче унăн асламăшне куртăм. Килĕшекен хĕрачана кĕтнĕ май унпа калаçса тăмалла пулчĕ. Акă тинех! Вăл мана хирĕç утать, асламăшĕн çиллес сăнĕ те хăратмасть халĕ. Анчах çак самантра пирĕн пата шăллăм велосипедпа çитсе чарăнчĕ.

– Валерка, анне сана килтен нисçта та кайма хушмарĕ! Вăл паян санăн пыйтусене пĕтересшĕн, – терĕ те вăл ним пулман пекех каялла çаврăнчĕ.

Çакăн хыççăн Вероникăпа тек хутшăнман, ытти хĕрачасемпе те…

*Валера О.*

Канаш районĕ.

---

**ЫТАРЛĂ ХАЛАП**

# Кушак çури



Пĕр пĕчĕк лавкка çине сутуçă: «Кушак çурисем сутатăп», – тесе çырса хунă. Çакă, паллах, вырăнти ачасене питĕ илĕртнĕ. Нумай та вăхăт иртмен, лавккана арçын ача кĕнĕ. Сутуçăна сывлăх суннă хыççăн вăл кушак çурисен хакĕпе сăпайлăн кăна кăсăкланнă.

– 300 тенкĕрен пуçласа 500 таран, – тенĕ сутуçă.

Арçын ача ассăн сывланă та енчĕкне кăларса вак укçа шутлама тытăннă.

– Манăн халĕ 20 тенкĕ кăна, – тенĕ вăл хурлăхлăн. – Тархасшăн, кăшт та пулин пăхса илем-ха вĕсем çине.

Сутуçă йăл кулнă та кушак çурисене пысăк курупкаран кăларнă. Ирĕке тухнăскерсем тўрех тарма пикеннĕ. Пĕри темшĕн ыттисенчен юлса кайнă, хыçалти урине шутарса пынă.

– Калăр-ха, мĕн пулнă çак кушак çурине? – ыйтнă арçын ача.



Сутуçă мĕскĕн чĕрчун сусăр урапах çуралнине пĕлтернĕ.

– Ветеринара ĕненес пулсан, вăл ĕмĕрĕпе те тўрленеймĕ. Çавăнпа уксахлать.

Çакна илтсен арçын ача хумханса ўкнĕ.

– Манăн шăпах ăна туянас килет.

– Арçын ачи, эсĕ кулатăн-и? Вăл йĕркеллĕ кушак çури мар-çке! Мĕне кирлĕ вăл сана? Тепĕр тесен, эсĕ çав тери пысăк чĕреллĕ пулсан ăна ахалех илсе кайма пултаратăн, – тенĕ сутуçă.

Арçын ачан сăн-питĕнче кăмăлсăрланни палăрнă.

– Çук, манăн ăна ахаль илес килмест, – хумханчăк сасăпа тавăрнă ача. – Ку кушак çури те ыттисемпе танах. Эпĕ ăна тулли хакпах туянма хатĕр, – тенĕ вăл çирĕппĕн.

Арçын ача çине куç илмесĕр пăхнă хыççăн сутуçăн чĕри хускалнă.

– Ывăлăм, эсĕ пĕтĕмпех ăнланмастăн. Çак мĕскĕнскер нихăçан та ытти кушак çурисем пек чупма, выляма, сикме пултараймасть.

Çак вăхăтра арçын ача сулахай шăлавар пĕççине тавăрма тытăннă. Сутуçă арçын ачан хăрушла кукăрăлнă, металл кăшăлпа тытăнса тăракан урине асăрханă.

– Эпĕ те нихăçан та чупаймăп тата сикеймĕп, – тенĕ ача чĕтрекен сасăпа. – Çак кушак çурине те унăн йывăрлăхне ăнланакан, пулăшса пыракан кирлĕ.

Сентре хыççĕнче тăракан сутуçă тутине пăчăртанă. Куçĕсем куççульпе тулнă. Кăштах шăп тăнă хыççăн вăл кулма хăтланнă.

– Ывăлăм, пур кушак çурин те сан пекех чĕреллĕ хуçа пултăрччĕ…




ÇĔНĔ КĔНЕКЕ

# Шанчăклă тусăн хакĕ çук

**_Тин кăна çулла çитнĕччĕ-ха. Хĕвел шеллемесĕр шевлисене сапалатчĕ, улăхвăрман пылак çырлапа сăйлатчĕ, кайăксем каçса кайса илемлĕ юррисене шăрантаратчĕç, ачасем каникулта савăнатчĕç... Акă кĕркуннене те кĕтсе илме вăхăт. Унăн – хăйĕн ĕлккенлĕхĕ, савăклăхĕ, ытарайманлăхĕ. Çанталăк кăмăлĕ самантсерен улшăнать. Шкулсем вара вĕренекенсен сассипе тулаççĕ._**




Чăваш кĕнеке издательстви те Пĕлӳ кунĕ тĕлне вăтам ӳсĕмри ачасем валли çĕнĕ кăларăм хатĕрлерĕ – 500 экземплярлă тиражпа Аркадий Казановăн «Çĕнĕ туссем» кĕнеки (редакторĕ – Ольга Иванова, ӳнерçи – Елена Енькка) пичетленсе тухрĕ. Калавсенчен тăракан повеçĕн тĕп геройĕ – Вена Арушкин – ашшĕ-амăшĕпе пĕрле ялтан Шупашкара куçса килет. Çĕнĕ вĕренӳ çулĕнчен хула шкулĕнчи пиллĕкмĕш класа çӳреме пуçлать вăл. Паллах, малтанхи тапхăрта йăлт шиклентерет: ют çĕрте «тем тусан лайăх»... Вена «никама та, пĕр ачана та пĕлмест» кунта. Пурте çĕнĕ çын çине витĕр шăтарасла, хакласа та сăнаса пăхаççĕ. Пĕрремĕш кунах хут таткипе перекен, «Асту!» тесе асăрхаттаракан, «чукмарпа» хăмсаракан тупăнать. Тăхтав вăхăтĕнче вара арçын ачана кӳрентерме те хăтланаççĕ. Вена çухалса каймасть – кăткăс лару-тăруран тивĕçлĕ хăтăлса тухать. Анчах вăхăтлăха кăна: шăпа тĕрĕслевĕсем вĕçленмен-ха...

Пĕрре пăхсассăн, Вена – ыттисенчен нимĕнпе те уйрăлса тăман арçын ача. Тантăшĕсем пекех шкула çӳрет, пăшалтан пересcипе кăсăкланать, малтисен ретĕнче пулма тăрăшать. Çав хушăрах вăл тĕрĕсмарлăха, киревсĕрлĕхе ыттисенчен çивĕчрех туять, йывăрлăхсем умĕнче пуç усмасть, пуçланă ĕçе вĕçне çитермесĕр те лăпланмасть. Сăмахран, музейри сăнӳкерчĕкре сăнланнă хĕрарăма шыраса тупать, ăна шкулти тĕлпулăва чĕнет. Е тата Рома килне ăсатма каять, юлташĕн ӳсĕр амăшне йĕркене кĕртесшĕн çунать. Çакăн пек курăмлă тĕслĕхсем кĕнекере татах та пур.

Хăйĕн шухăшне (вăл пуриннипе килĕшсе тăмасан та) пысăк йыш умĕнче пĕлтерме вăтанмасть Вена. Вĕрентекен художниксем çинчен класс сехечĕ ирттересси çинчен хыпарласан арçын ача тӳрех аслашшĕ çинчен каласа пама тĕв тăвать. Ача ăна чунтан хисеплет, унăн çитĕнĕвĕсемпе, илемлĕ ӳкерчĕкĕсемпе пĕр класра вĕренекенсене те паллаштарасшăн. Хула ачисем унăн чун тăрăмне ăнланмасси те, сивлесси те, тăрăхласси те хăратмасть маттурскерне.

Хăйĕн пултарулăхне кăтартса, уçă та тӳрĕ кăмăлĕпе палăрса класра ырă ят çĕнсе илет, çĕнĕ туссем тупать Вена Арушкин. Юлташĕсемпе пĕрле çынна йывăрлăхра пулăшма, тӳрккеслĕхпе ултава хирĕç кĕрешме яланах хатĕр. Туслă йыш кивĕ хут пуçтарать, чăрăшсене çут çанталăк сăтăрçисенчен сыхлать, поэзи уявĕ йĕркелет, тĕрĕслĕхе икĕпитленмесĕр куçран калать, айăпсăррисене хӳтĕлет...

Анчах пурнăçра ыррипе юнашарах усалĕ те тĕлланса çӳрет. Кĕнекере те чăрсăр, пуçтах арçын ачасем часчасах йĕркене пăсаççĕ, хăйсенчен айванраххисене хур кăтартаççĕ. Акă Влас Пульховскийпе юлташĕсем кушака нушалантарма хăяççĕ: «Шăп çакăнта Верăн кушакне... туратран кантрапа çакнă та патакпа çапаççĕ. Кашни çапмассерен мĕскĕн чĕр чун хыттăн çухăрать, çӳлелле ывтăнса малти урисемпе кантрана чăрмалама тытăнать...» Телее, пуçтахсене Венăпа ытти ачасем чараççĕ.

Калавсенчен тăракан повеçе 1988–1990 çулсенчех çырнă, унта иртнĕ ĕмĕр вĕçĕнчи вĕренекенсен шкул пурнăçне сăнласа панă пулин те, ку хайлавăн пĕлтерĕшне пĕртте чакармасть. Аркадий Петрович çамрăксен хутшăнăвне, ĕç-хĕлне ăста сăнлать, вĕсене хумхантаракан ыйтусене туллин уçса парать. Сăнарсене тăтăшах суйлав умне кăларса тăратать вăл. Мĕнлерех йышăну тунинчен малаллахи ĕç-пуç аталанăвĕ чылай килет. Эпир те геройсемпе пĕрле шухăша путатпăр: вăл е ку кăткăс лару-тăрура мĕн тунă пулăттăмăр-ха?

«Шанчăклă тусăн хакĕ çук», – тенĕ ваттисем авалтан. Мал ĕмĕтлĕ те хастар, тăрăшуллă вулаканшăн ырă кĕнеке – чăн-чăн юлташ вырăнĕнчех. Аркадий Казановăн «Çĕнĕ туссем» повеçĕ те кăсăклă, хăйне евĕрлĕ сăнарсемпе, сĕтеклĕ чĕлхипе сире тыткăнласса шансах тăратпăр.

ЫТАРЛĂН

## Вăрăмтуна

Пĕррехинче вăрăмтуна шăнаран çапла ыйтнă:

– Ку тăрăхра чечексем пур-и?

– Чечексем çинчен нимĕн те пĕлместĕп. Канавсем вара консерв банкисемпе, тислĕкпе, тасамарлăхпа туп-туллиех, – хуравланă шăна, унтан таврари мĕнпур çӳп-çап шăтăкĕ ăçта вырнаçнине ăнлантарма пуçланă.



Вĕçтернĕ вăрăмтуна вăл кăтартнă еннелле. Çул çинче пыл хуртне тĕл пулнă.

– Çывăхра мĕнле те пулин çӳп-çап шăтăкĕ курман-и? – кăсăкланнă вăрăмтуна.

– Çӳп-çап, тасамарлăх йăви-и? Çук, ниçта та курман, – тĕлĕннĕ пыл хурчĕ. – Анчах пур çĕрте те ырă шăршăллă илемлĕ чечек ӳсет.

Вара вăл хăш уçланкăра черчен лилисем пуррине, ăçта тинтерех гиацинт çурăлнине пĕлтернĕ.

Акă мĕншĕн юлташу хăвăнтан лайăхрах пултăр тенĕ.

## Кăранташ

Арçын ача çыру çыракан асламăшĕ çине пăхса тăнă-тăнă та тинех ыйтнă:

– Эсĕ ман çинчен çыратăн-и?

Асламăшĕ çырма чарăннă, йăл кулнă та мăнукне çапла хуравланă:

– Çапла, сан çинчен. Анчах эпĕ мĕн çырни мар, мĕнпе çырни пĕлтерĕшлĕрех. Эсĕ ӳссе çитĕнсессĕн çак кăранташ пек пул...

Шăпăрлан кăранташ çине кăсăкланса пăхнă, çапах тĕлĕнмелли нимĕн те асăрхаман.

– Вăл ыттисенчен нимĕнпе те уйрăлса тăмасть, пурин пекех! – тенĕ ача.

– Япаласем çине мĕнлерех пăхнинчен чылай килет. Ку кăранташăн пилĕк пахалăх пур. Çут тĕнчепе килĕшӳре пурăнас тесен вĕсем сана та кирлĕ. Пĕрремĕшĕнчен, эсĕ питĕ пултаруллă çын пулсан та ертсе пыракан алă çинчен ан ман. Эпир ăна Аслă хăват тетпĕр. Çав хăвата шан тата ăна туйма вĕрен. Иккĕмĕшĕнчен, кăранташ çыртăр тесен ăна шĕвĕртмелле. Ку кăштах ыраттарать, анчах ун хыççăн вăл çинçерех çырать. Эппин, ыратăва тӳсме вĕрен, ку сана лайăхлатĕ. Виççĕмĕшĕнчен, кăранташпа усă курнă чухне тĕрĕс мар çырнине тасатма пулать.

Асту: тӳрленме нихăçан та кая мар. Чылай чуне ку кукăр çулпа каяссинчен упрать. Тăваттăмĕшĕнчен, кăранташăн пĕлтерĕшĕ унран тунă йывăçра мар, шалта, – графитра. Эсĕ те чунри кăмăлтуйăма тимлĕхсĕр ан хăвар. Пиллĕкмĕшĕнчен, кăранташ хăй хыççăн ялан йĕр хăварать. Эсĕ те ĕçӳсемпе хăв хыççăн йĕр хăваратăн, çавăнпа кашни утăмна шухăшласа ту.



***Вырăсларан Ольга ИВАНОВА куçарнă.***

УЯВ

# Вулама-çырма пĕлни — телей

Авăн уйăхĕн 8-мĕшĕнче çулсеренех Пĕтĕм тĕнчери хутла пĕлекенсен кунне /Международный день грамотности/ уявлаççĕ.

1965 çулта Тегеранра «Вĕренӳ министрĕсен хутпĕлменлĕхе пĕтерессипе çыхăннă Пĕтĕм тĕнчери конференцийĕ» иртнĕ. Унта хутшăнакансен сĕнĕвĕпе 1966 çулта ЮНЕСКО çӳлерех асăннă уява паллă тума йышăннă.

XXI ĕмĕрте те вулама-çырма пĕлмен çынсем пурри никамшăн та вăрттăнлăх мар. Уйрăмах Африкăри, Азири çĕршывсенчен вĕсен йышĕ пысăк. Çакăн çинчен статистика кăтартăвĕсем те çирĕплетеççĕ. Çĕр чăмăрĕ çинче пурăнакансенчен 15 процентĕ вулама та, çырма та пĕлмест. Вĕсенчен 2/3 пайĕ – хĕрарăмсем. Хут пĕлменнисен 40 процентĕ Индире пурăнать.

Технологи, информаци аталанăвĕн енĕпе çӳллĕ картлашка çинче тăракан çĕршывсенче те хальлĕхе сас палли палламан çынсем пур-ха. Кашни пиллĕкмĕш çын тĕрĕс çырассипе вуласcине алла илеймен. Планета çинчи çĕршер миллион ача вуçех шкулсене çӳремест...

Вулама-çырма пĕлни мĕн тери пысăк телей пулнине асра тытасчĕ. «Вĕренни этеме çунат парать. Вĕрентмен ача – путек, вĕрентнĕ ача – йĕкĕт», – тесе ăс панă ваттисем. Çавăнпа та май пур чухне вĕренесчĕ, пĕлӳ илесчĕ.

*Страницăна Ольга АВСТРИЙСКАЯ хатĕрленĕ.*

Тантăш
35 №, 2016, авăн, 8



# Газдановсем




**Çурçĕр Осетири Дзуарикау салинчи Асахматпа Тасо Газдановсен çемйинче çичĕ ывăл çитĕннĕ: Магомед, Дзарахмат, Хаджисмел, Махарбек, Созрыко, Шамиль, Хасанбек. Ашшĕ-амăшĕн савăнăçĕ те виçесĕр пулнă.**
**– Çичĕ кин кĕмелле пирĕн киле, мăнукăмăрсем вара çиччĕ кăна мар, урам тулли чупчăр. Телейлĕ пурнăç пултăрччĕ пирĕн вата ĕмĕрте, – ĕмĕтленнĕ телейлĕ мăшăр час-часах.**



## Çапăçусенче арăслан пек пулăп!

1941 çул. Газдановсен çичĕ ывăлĕ те вăрçă хирне тухса кайнă. Амăшĕ вара канăçне йăлт çухатнă. Кăнтăрла хĕвелпе калаçнă.

– Сарăскерĕм, хитрескерĕм, ывăлсене йывăр вăхăтра ăшăлăх парнелесем, тăван тăрăха çавăрса килме вăй-хăват çитерсем. Пире пулăшсам, ахăр саманара алă парсам, айккинчен пăрăнса ан иртех, – тилмĕрнĕ вăл кунсерен тӳпене ташласа тухакан хĕвеле тинкерсе.

Каçхине те ыйхи килмен, тепĕр чухне сĕм-çĕрле урама чупса тухнă. Каллех тӳпенелле тинкернĕ. Çапçутă уйăхпа пуплеме тытăннă.

– Уйăхăм, тархасшăн, манăн тĕпренчĕкĕмсен утас çулне çутатса пыр. Çу çулĕ парнеле, таврăнма пыллă сукмак хатĕрле. Ăнлансам, вĕсене ырă-сывă курас килет, – куççуль витĕр калаçнă хĕрарăм çаплипех çӳлелле пăхнă май.

...Малтанах икĕ ывăлĕ вăрçăра пуç хунă. Çав тери асапланнă ашшĕпе амăшĕ. Кĕçех виççĕмĕш ывăлĕ вилнĕ çинчен калакан хут килнĕ салана. Тасо Газдановăна ку хыпар вăйран янă. Вырăнпа выртнă. Аран сывласа вĕçĕмсĕр ахлатнă. Тапхăр-тапхăр ăнран тухнă, унтан майĕпен тăна кĕнĕ.

– Ах... Ывăлăмсем... Мĕнле-ха капла пулса тухрĕ-ĕ-ĕ?! Ытти тĕпренчĕкĕмсене кураймасăрах вилетĕп ĕнтĕ. Çак вăхăтăрта таçта ĕнтĕ вĕсем... Чĕре тӳсмелле мар ыратать, – тесе хăй ăшĕнчи темиçе сăмаха аран пăчăртаса кăларнă.

Çак кун хĕрарăм хуйха чăтаймасăр ĕмĕрлĕхех куçĕсене хупнă.

Шел, Газдановсен пĕр ывăлне те киле таврăнма шăпа пӳрмен. Хаджимелпе Магомед Севастополь çывăхĕнче, Дзарахмат Новороссийск патĕнче, Хасанбек Белоруссире, Созрыко Киевра, Махарбек Мускавра, Шамиль Çĕнтерӳ кунĕнче Берлинта куçĕсене хупнă.

«...Пĕр хулара эрне пек усрасан, пире урăх вырăна илсе кайрĕç. Анчах пирĕн эшелонран нимĕçсем турпас турĕç. Салтаксем нумай пĕтрĕç. Мана та ураран амантрĕç. Суранĕ хăрушă марччĕ, бомба ванчăкĕ пĕççе çеç çурса кайрĕ. Шăмма тивеймесĕр. Госпитальте выртрăм уйăх çурă. Тепĕр çапăçу та ытла хăрушă пулчĕ. Юлташпа вилнисене пысăк çунапа пуçтаратпăр. Каçĕ çутăччĕ, уйăх тулнă вăхăт. Пире фрицсем асăрхарĕç. Тытăнчĕç минăсем ыватма. Эпир юр ăшне чăмрăмăр, çуна хӳттинерех. Пĕр хушă хайхисем пеме пăрахрĕç. Пире тĕп турăмăр терĕç ахăртнех. Эпир сиксе тăтăмăр та çунана малалла сĕтĕрме тытăнтăмăр. Мĕн вăй çитнĕ таран чупатпăр. Инçе те мар – вăрман. Унччен те пулмарĕ ман енне мина пырса ӳкрĕ. Самантранах алла темĕскер пырса çапрĕ. Ӳкрĕм. Ăнлантăм мĕн пулнине. Юлташ алла çыхса мăйран çакса ячĕ. Вăрмана епле çитсе ӳкнине астумастăп. Питĕ хĕрӳ пырать вăрçă, анчах эпир çентеретпĕрех! Е тата хамăн юлташ каласа пани те чуна ыраттарчĕ. Нимĕç тыткăнне лекнĕ пирĕн салтаксене мĕн тери асаплантарнă. Çамрăксене пĕр вăрăм йывăç сарайне хупнă та, алăкĕсене, чӳречисене питĕрсе лартнă. Стенисем çине бензин сапса тивертсе янă. Хăйсем сарай тавралла автоматсемпе тăнă. Хăшĕ те пулин çунакан сарайĕнчен сиксе тухма пултарсан, çав самантрах пульăсем айне лекнĕ. Ах, çакăнтан хăрушши çĕр çинче нимĕн те пулма пултараймасть пуль? Тавралла этем кĕлеткисем мар, çунса хуралнă вутпуççисем выртнă. Хăшĕсен аллисем татăлса ӳкнĕ, хăшĕсен – урисем. Пуççăррисем те пулнă. Мĕнле чунлă пулмалла-ши чĕрĕ çынсене çапла çунтарма! Аннеçĕм, мăшăрăм! Эпĕ кашни утăмра, кашни сехетре нимĕççене тавăрма тăрăшăп. Юлташсемшĕн, тăвансемшĕн – пуриншĕн те! Гитлер хурахĕсене кăтартăпăр-ха хăйсене те! Вĕсене пирĕн çĕр çинче пĕр çын юлмиччен пĕтерме, çапăçусенче арăслан пек паттăр та хастар пулма сăмах паратăп!» – тесе шăрçаланă пĕр çырăвĕнче Дзарахмат.

## Пĕртен-пĕр мăнук – Мила

Газдановсен вăрçă пуçланиччен пĕр ывăлĕ Дзарахмат çеç çемье çавăрма ĕлкĕрнĕ. Хĕрпĕрчийĕ вара, Мила, вăл фронта тухса кайсан çут тĕнчене килнĕ. «Пурнăçсем епле? Питĕ пĕлес килет, ылтăн е кĕмĕл çуралчĕ пирĕн?» – кăсăкланнă салтак пĕр çырура. Ăна çийĕнчех хурав панă, хĕр çуралнине хыпарланă.

– Çырăва атте илсе вуланă-ши? Вуланă пулсан хĕпĕртерĕ-ши? Е çав хыпара пĕлеймесĕрех пурнăçран уйрăлчĕ-ши? – тенĕ Дзарахматăн хĕрĕ пăшăрханса та куççульленсе. – Эпир аттепе унăн пĕртăванĕсен çырăвĕсене, орденĕсемпе медалĕсене паянхи кунччен те типтерлĕн упратпăр. Вĕсем пирĕншĕн ылтăнран та хаклă. Çавсене алла тытмассерен пырта тем капланать, куç куççульпе тулать. Атте... Мĕн тери хаклă сăмах... Эпĕ ăна сăнӳкерчĕкре çеç курнă-çке. Вăрçа пула аттесĕр ӳсрĕм, паянхи кунччен те уншăн тунсăхлатăп. Вилтăприйĕ ăçта пулнине те пĕлменни чуна шĕкĕ евĕр кăшлать. Эх, чун каниччен хӳхлĕттĕм вилтăприне ыталаса...

Вăрçăра паттăрсен вилĕмĕпе вилнĕ, хăй хĕрне Милăна сăпкара ярăнтарма мар, пĕр хутчен те курман Дзарахматăн ултă мăнук çуралнă. Мăнукĕн мăнукĕсем те йышлăн.

– Асатте чĕрçийĕ çинче утьăкка сиксе курнă эпĕ. Шел, мана тытса ларнă вăхăтрах вилсе кайнă... Ун чухне, Çĕнтерӳ кунĕнче, пĕрене купи çинче ларнă эпир. Ара, ултă ывăлĕн вилнĕ хучĕсем килнĕ, кĕçĕнни çеç сывă юлнă. Тĕпренчĕкĕ кĕç-вĕç укăлча хапхирен ытти салтаксемпе килсе кĕрĕ тесе кĕтсе ларнă вăл. Анчах çав вăхăтра пирĕн еннелле хура тум тăхăннă арçын ушкăнĕ утнине курнă: «Çак çынсем ман патах пулас... Кĕçĕн ывăлăм та вилнĕ ахăртнех», – тенĕ те, çавăнтах чĕри тапма чарăннă. Чăнах та, килекен ушкăн асаттене ырă мар хыпар пĕлтерме васканă. Кĕçĕн ывăлĕ те паттăрсен вилĕмĕпе вилнине пĕлсе юлаймасăрах çут тĕнчерен уйрăлса кайнă манăн асатте, – тенĕ Мила юратнă аслашшĕне аса илнĕ май.

1963 çулта Тасо Газдановăпа çичĕ ывăлне халалла족 палăк лартнă. Унталла пăхсан... Кирек кам та куççуль кăларнă. Ара, хуйхăпа пусăрăнса çӳçĕ шуралнă хĕрарăм хӳхлесе макăрать-çке. Çӳл тӳпене вара çичĕ тăрна вĕçет... Вĕсем – Тасон ывăлĕсем...

Тавралла йывăçлă хитре парк та çитĕннĕ. Кунта кашни çулах тем чухлĕ турист килнĕ. Мила Газданова килен-каяна ашшĕпе пĕртăванĕсен тата асламăшĕпе аслашшĕн кун-çулĕ пирки тĕплĕн каласа панă. Вĕсен ыйтăвĕсене туллин, чунне ыраттарса та куççуль кăларса хуравланă. Хăнасем паттăр салтакăн хĕрĕпе палăк çумĕнче асăнмалăх сăн ӳкерĕннĕ, татах та çак вырăна çитсе курма сăмах панă.

## Аттене тупас тесе ĕмĕтленнĕ

1970 çулта ял халăхĕ тăрăшнăран пĕртăвансене асра тытса шкулта музей уçнă. Унта паттăр салтаксен япалисене тирпейлĕн вырнаçтарнă. Çавăн пекех вĕсем пурăннă çурт макечĕ те вырăн тупнă. Ара, хăй вăхăтĕнче Газдановсем те çак шкултах пĕлӳ илнĕ. Çитменнине пĕртăвансенчен пĕри, Махарбек, педагогра тăрăшнă. Ачасене тарăн пĕлӳ парас тесе ырми-канми ĕçленĕ.

– Газдановсемпе лайăх пурăннă эпир. Çемйи те туслăччĕ. Çурчĕ вара питĕ пысăкчĕ. 25 метр сарлакăшахчĕ. Тен, тата пысăкрахчĕ. Çав хăтлă çуртра пĕрре мар выляна эпир. Газдановсен ывăлĕсем вăрçа кайсан çак пӳрте нимĕçсем бомба пăрахса юрăхсăра кăларчĕç. Çапла, чылай хурлăх кăтартрĕ пире ирсĕр фашист. Çапах пуçа усмарăмăр. Çĕнтертĕмĕр. Эпĕ тăван тăрăхăма таврăнтăм-ха, Газдановсен ывăлĕсен, манăн юлташсен шăписем урăхларах пулчĕç. Питĕ шел паллах. Вĕсене халалласа палăк тата музей уçни – калама çук пысăк савăнăç. Пирĕн паттăрсене ĕмĕрне те манма юрамасть, – тенĕ ял çынни Умархан Черджиев.

Мила Газданова патне 2013 çулта Новороссийскран ырă хыпар çитнĕ. «Сирĕн аçун вилтăприне тупрăмăр», – тенĕ унта. Хĕрарăм тӳрех ачисемпе мăнукĕсем патне шăнкăравланă. Хăйĕн виçесĕр савăнăçне куççуль витĕр пайланă. Кăштахран Газдановсем хулана тухса кайнă. Мила ашшĕн вилтăприйĕ çинче ĕсĕклесе макăрнă, ачисемпе мăнукĕсем те куççулĕсене тытса чарайман.

– Паянхи кунччен те асаннепе асаттене хĕрхенетĕп. Çичĕ ывăлне те вăрçа ăсатма мĕн тери йывăр пулнă-çке вĕсене! Эпĕ аттене тупас тесе тахçанах ĕмĕтленнĕ. Ĕнтĕ унăн ытти пĕртăванĕн вилтăприсен умĕнче те пуç таясчĕ, – тенĕ Мила.

2015 çулта вара Газдановсене халалласа лартнă палăк çумĕнчи паркри йывăççене предприниматель касса дачăсем хăпартма тытăннă. Çакă Мила Доева-Газдановăшăн уяр кунта аçа çапнă пекех туйăннă.

– Ăнланмастăп, мĕншĕн паттăрсене халалланă парка пĕтермелле? Вĕсем пире мирлĕ пурнăç парнелессишĕн хăйсене шеллемен. Халĕ вара паттăрсем çине алă сулакан та тупăннă. Манăн тăвансене кăна мар, вăрçă вăхăтĕнче шăп çав вырăнта шкултан таврăнакан вуннăмĕш класра вĕренекен çирĕм ачана нимĕççем пĕр шелсĕр персе вĕлернĕ. Ку вырăна вĕсене те, ним айăпсăр чунсене те халалланă-çке, – хирĕçленĕ Мила.

– Тупнă кулянмалли, сана урăх вырăна çĕр уйăрса парăпăр, – парăнман лешсем.

– Эпĕ çĕрпе кăсăкланмастăп! Мана тăвансене тата çав çирĕм ачана хисеплени кирлĕ. Ирсĕр фашистсемпе кар тăрса кĕрешнĕ аттепе унăн пĕртăванĕсене çакăн пек хисеп тăватăр-им? Вĕсем çӳл тӳпере куллен хĕвел пăхтăр тесе хăйсен пурнăçне шеллемен, – пăшăрханса пупленĕ вăл.

Анчах хăлхана чикмен унăн сăмахĕсене, парк вырăнне çаплипех çĕнĕ дачăсем хăпарма тытăннă...

***Элиза ВАЛАНС хатĕрленĕ.***




# Сăмахкаçмăшсем



1. Килти выльăх. 2. Йĕпе-сапа вырăн. 3. Унта хоккей вăййи çуралнă. 4. Пуç тăрринчи çĕршыв. 5. Пульницăри пӳлĕм. 6. Флотри çамрăк матрос. 7. Çурçĕрти вĕçенкайăк. 8. Тĕлĕнтермĕш. 9. Ăна полковник тăхăнать. 10. Ребусăн юлташĕ. 11. Вăл турат çинче çитĕнет. 12. Упăте тĕсĕ. 13. Тинĕсри пулă. 14. Суту-илӳ хатĕрĕ. 15. Хырăмĕ пур, çурăмĕ çук /туп. юм./. 16. Чăваш юрăçи.



1. Çар званийĕ. 2. Одиссей ывăлĕ. 3. «Хутаçлă» вĕçен кайăк. 4. Кăнтăрти йывăç. 5. Крепоçри уйрăм вырăн. 6. Ĕлĕкхи налук. 7. Яш-шыв палли. 8. Водород бомбин «ашшĕ». 9. Пушă. 10. Пуш хирти караван. 11. Хваттерти хурт-кăпшанкă. 12. Вăл салтак пулнă. 13. Пуйăссене çул паракан. 14. Пĕр-пĕр япалана сӳтсе явнă вăхăт. 15. Ăна-кăна инçетрен туякан çын. 16. К.Маркс «пуянлăхĕ».



1. Наган «юлташĕ». 2. Чăваш ӳнерçи. 3. Вăрнарти Социализмла ĕç геройĕ. 4. Кĕпер. 5. Сăмах вылянăвĕ. 6. Вырăс телекомментаторĕ. 7. ЦСКА командин чапа тухнă хоккеисчĕ, хӳтĕлевçи. 8. Вырăс актерĕ. 9. Укол тумалли хатĕр. 10. Сăртту ишĕлчĕкĕ, пайĕ. 11. Шăлсем хушшинчи шăтăк /вырăсла/. 12. Чăваш çыравçи. 13. Чăваш журналисчĕ. 14. Çĕрпӳ районĕнчи ял. 15. Чăваш юрăçи. 16. Чăваш космонавчĕ.

## Вĕçсĕр-хĕрсĕр ункă



1. Çурăм хыçĕнчи «хутаç». 2. Çурçĕрти хула. 3. Шывра ишмелли хатĕр. 4. Чăваш космонавчĕ. 5. Паллă журналист, чылай çул «Хыпар» хаçатра ĕçленĕскер. 6. Пĕр-пĕр япала çинчи эреш. 7. Спорт вăййинчи меслет. 8. Шаблон, клише, … 9. Физика терминĕ. 10. Авалхи инди халăхĕн çырулăхĕ. 11. Чир çулне пӳлни. 12. Апельсин «юлташĕ».

## Картлашкапа аннă май, вулансах пырать сăмах



**Ăнлантарни:** хуравĕсене тĕрĕс тупсассăн картлашка варринче инçет хĕвел тухăçĕнчи хула ятне вулама пулать.

1. Вăл вăрманта нумай. 2. Ăна Маяковский шăлавар тăхăнтарнă. 3. Финиш мар. 4. Медальрен сумлăрах. 5. Ун çинче авалхи грексен туррисем пурăннă. 6. Унта пакша пурăнать. 7. Панулми сорчĕ. 8. Хăпармалли хатĕр. 9. Чăвашсен кӳрши. 10. Физкультура пиччĕшĕ. 11. Тăсăлса кайнă йытă.



## Икĕ-виçĕ çавра, фауна тавра

Темĕншĕн кӳреннĕ сурăх:
– Кĕтĕве каймастăп урăх!

* * *

Иртенпех çиллес, кур, вăкăр –
Ун сасси çеç – мăкăр-мăкăр…

* * *

Сĕкĕшесшĕн качака,
Каялла чака-чака.

* * *

Пит усал чĕрчун вăл тигр,
Ытахаль пырса ан тĕкĕр…

* * *

Тĕм хушшине тарать калта,
Хăй хӳрине тата-тата…

* * *

Пĕчĕк çеç пулсан та кăткă,
Ун йăвийĕ питĕ хăтлă.

* * *

Пит хăравçă-çке куян –
Курсанах ăна туян.

* * *

Ах, ытла та пит хавшак
Канăçа пĕлмен ашак.

* * *

Хамлатса вĕрет ав йытă:
– Ан вĕçертĕр мана, тытăр…

* * *

Майракаллă вăл пăлан,
Вăрманта ăна паллан.

***Николай КРАСНОВ*** (Йĕпреç районĕ) ***хатĕрленĕ.***